**Анатолий ЮМАН      Юрий КУДАКОВ**

# АХ, МĔН-МА-ШИ?..

## ЮРĂСЕМ

Шупашкар 2007

УДК 78
ББК 85.94я738
Ю 41

Юман А.Ф., Кудаков Ю.Д.
Ах, мĕн-ма-ши?.. (Юрăсем). — Шупашкар: ЧПГĂИ, 2007. — 52 с.

Кĕнекене чăвашсен паллă композиторĕ, Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Çеçпĕл Мишши ячĕллĕ преми лауреачĕ Юрий Дмитриевич Кудаков (Илькуш) Анатолий Юман поэт сăввисем тăрăх çырнă юрăсене кĕртнĕ.

В сборник включены песни известного чувашского композитора, лауреата премии комсомола Чувашии имени Михаила Сеспеля Юрия Дмитриевича Кудакова (Ильгуша), написанные им в содружестве с поэтом Анатолием Юманом.

© Ю.Д. Кудаков, 2007
© А.Ф. Юман, 2007

# АНАТОЛИЙ ЮМАН

Анатолий Федорович Ермилов (Юман) 1932 çулхи юпа уйăхĕн 28-мĕшĕнче Ульяновск облаçĕнчи Чăнлă районĕнчи Чăвашкасси ялĕнче çуралнă. 1952 çулта Вăта Тимĕрçенти вăтам шкултан вĕренсе тухсан ăна райхаçат редакцине ĕçлеме чĕнсе илнĕ. Кунта вăл 37 çул хушши тăрăшнă. Куçăмсăр майпа Хусанти Парти аслă шкулĕ çумĕнчи журналистсен курсĕнчен вĕренсе тухнă. Облаçра чăвашлăха чĕртсе ярас ĕçе хастар хутшăннă. 1989 çулта Ульяновскра тăван чĕлхепе «Канаш» хаçат тухса тăма пуçласан тивĕçлĕ канăва тухиччен унта вăй хунă.

Малтанхи сăвви 1947 çулта райхаçатра çапăнса тухнă. Халĕ Анатолий Федорович 20 ытла кĕнеке авторĕ. Паллăраххисем: «Телей сăпки» (поэма, 1972), «Чĕмпĕр чулĕ калаçать» (поэмăсем, 1975), «Çунатсем» (сăвăсем, поэма, 1988), «Чĕре çĕввисем» (сăвăсемпе поэмăсем, 1992), «Кăвак йĕр» (сăвăсем, поэма, 1992), «Суйласа илнисем» (1994), «Натюш» (сăвăлла аса илнисем, прозăллă сăвă, 2003), «Сонетсем» (2003), «Сонетсем, иккĕмĕш çаврăм» (2005), «Марине» (поэма, 2005), çав шутрах «Пурнăç авăрĕ» сăвăллă роман т. ыт. те.

А. Юман 1967 çултанпа журналистсен Союзĕн членĕ, 1983 çултанпа СССР писателĕсен Союзĕн членĕ, Раççей культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш халăх академикĕ, Чăнлă районĕн хисеплĕ гражданинĕ, ЧНК ваттисен канашĕн членĕ. Чăвашсен профессиллĕ писателĕсен Союзĕн П. Хусанкай ячĕллĕ, Ульяновск облаçĕнчи Н.Абрамов тата журналистсен организацийĕн М. Ульянова ячĕллĕ премисен лауреачĕ.

# ЮРИЙ КУДАКОВ

Юрий Дмитриевич Кудаков (Илькуш) 1942 çулхи юпа уйӑхӗн 31-мӗшӗнче Чӑваш Республикине кӗрекен Çӗмӗрле районӗнчи Хутар ялӗнче колхозник çемйинче çуралнӑ. Канашри педагогика училищинче (1959—1962) тата Хусанти патшалӑх педагогика институчӗн музыкӑпа педагогика факультетӗнче (1963—1967) вӗренсе профессиллӗ музыка пӗлӗвне илнӗ. 1967 çултанпа Чӑваш патшалӑх педагогика институчӗн (халӗ педагогика университечӗн) музыка инструменчӗсен кафедрин преподавателӗнче вӑй хурать (1981 çултанпа — аслӑ преподаватель, 1992 çултанпа — доцент), 1998 çулта педагогика наукисен кандидачӗ ӑслӑлӑх степеньне илме диссертаци çырса хатӗрленӗ.

Ю. Кудаков Чӑваш патшалӑх театрӗсем лартнӑ 26 спек-такльти кӗвӗ авторӗ. 600 ытла юрӑ çырнӑ. Вӗсенчен чылайӑшӗ халӑхра анлӑн сарӑлнӑ. Композиторӑн 200 ытла произведенине Чӑвашрадио фончӗ валли çырса илнӗ. Пысӑк жанрлӑ произведенийӗсем: «Ялти уявра» (сӑввисем Р. Сарпин), «Ака-туйра» (сӑввисем С.Ильинӑн) хорпа юрлама çырнӑ сюитӑсем, «Туя туй пек тӑвар-и...» (сӑввисем В. Давыдов-Анатрипе Н.Симуновӑн) юрӑллӑ-ташӑллӑ сюита, «Икӗ пин çурта çутар-и...» (сӑввисем А. Дмитриевӑн) виçӗ пайран тӑракан а капелла хорӗ валли çырнӑ триптих, В. Ахун, Р. Агеева, П. Хусанкай сӑввисемпе çырнӑ ярӑмсем, баянпа калама çырнӑ 20 ытла пьеса, ача-пӑча юррисем. Вӑл çӗр ытла наука статьйисен, монографисемпе вӗренӳ пособийӗсен авторӗ т. ыт. те.

Чӑваш музыка культурине аталантарас ӗçри ӑнӑçусемшӗн ӑна «Чӑваш Республикин культура тава тивӗçлӗ ӗçченӗ» (1980), Чӑваш комсомолӗн Çеçпӗл Мишши ячӗллӗ преми лауреачӗ (1985), Чӑваш музыка обществин тава тивӗçлӗ деятелӗ (1995) ятсене парса чысланӑ. Республикӑри ял ӗçченӗсемпе çыхӑну тытнӑшӑн «Культурӑпа шеф ӗçӗн отличникӗ» СССР Культура министерствин знакӗпе наградӑланӑ. Ю. Кудаков «Çӗмӗрле районӗн хисеплӗ гражданинӗ» (2002).

## Кӗнекери юрӑсем пирки пӗр-ик сӑмах

«Юрра юрату ҫуратать», — тесе ҫырнӑччӗ «чӑваш шӑпчӑкӗ» Валентин Урдаш, тӑван литература историне юрӑ искусствин ӑсти пулса кӗрсе юлнӑ поэт. Ку вӑл чӑнах та ҫаплах ӗнтӗ. Юрра ҫеҫ мар, литературӑри мӗнпур жанрпа ҫырнӑ шедеврсене те ку е вӑл автор чӗрине ҫӗклентерсе е ыраттарса тухнӑ пысӑк юрату туйӑмӗ ҫеҫ ҫуратать темелле.

Ҫавах юрра хывӑнакан сӑвӑсен хӑйсен уйрӑмлӑхӗ те ҫук мар: вӗсенче кашни сӑмах пурнӑҫ чӑнлӑхне туллин те уҫӑмлӑн палӑртма тивӗҫ, ҫепӗҫлӗх, кӗвӗлӗх, тарӑн шухӑш таса ҫӑлкуҫ пек тапса тӑмалла, ҫав вӑхӑтрах кашни йӗрки халӑх чунне ҫывӑх, ӑнланма ансат пулмалла т. ыт. те. Юррӑн авторӗсем те виҫҫӗн: композитор, поэт тата юрӑ ӑсти. Ҫырнӑ юрӑ халӑх хушшинче анлӑн сарӑласси ҫав виҫӗ ҫын епле килӗштерсе ӗҫленинчен те нумай килет. Ҫапла вара кашни юррӑн шӑпи ҫын шӑпи пекех. Пӗрисем пӗр юрӑ ҫырсах халӑх асне кӗрсе юлаҫҫӗ, теприсем пултарулӑх тапхӑрӗнче темиҫе ҫӗршер юрӑ ҫырма та ӗлкӗреҫҫӗ.

Ку чухнехи эстрада «ҫӑлтӑрӗсем» тӳпери ҫӑлтӑрсем пекех йышлӑ. Вӗсем сӑввине те, кӗввине те хӑйсемех ҫыраҫҫӗ, ӑна хӑйсемех сцена ҫинче шӑрантаҫҫӗ. Ҫавна май юрӑ та «индустри никӗсӗ» ҫинче ҫуралать. «Укҫа миххи» ҫинче тата «ҫӑлтӑрсен» хӑйсен «фабрики» пур. Итлеме кӑна ан ӳркен. Юррисенче час-часах — ниме те пӗлтермен сӑмахсем, ют ритмсемпе кӗвӗсем, хӑлхана ҫурасла сасӑ тембрӗ... Шел пулин те, ҫак сулӑнкӑ чӑваш эстрадинче те сисӗнет.

Мана пурнӑҫра яланах периферии тунсӑхӗ хӗсӗрлесе тӑчӗ. Ҫавна май профессиллӗ композиторсемпе тачӑ ҫыхӑнса ӗҫлеме тӳр килмерӗ.

Иртнӗ ӗмӗрти утмӑлмӗш ҫулсен пуҫламӑшӗнче Шупашкара кайсан хамӑрӑн паллӑ ентешпе Григорий Лисков композиторпа тӗл пулса паллашнӑччӗ. Эпӗ сӑвӑсем ҫырнине пӗлсен, вӑл вӗсенчен пӗрне юрӑ ҫырма суйласа илчӗ. Анчах шухӑшланине пурнӑҫласа ӗлкӗреймерӗ, ҫӗре кӗчӗ.

Юрий Дмитриевич Кудаков композиторпа паллашсан эпӗ ҫав сӑвва ӑна кӑтартса пӑхрӑм. Вӑл вӑрах кӗттермерӗ, хӑй ҫырнӑ ҫӗнӗ юрӑ нотине ҫийӗнчех ярса пачӗ.

«Гр. Лисков сӑввӑр пӗлтерӗшне, туйӑмне аванах пӗлнӗ, паллах. Ҫырса хума ӗлкӗреймен, ватӑ пулнӑ, вӑр-варлӑх ҫухалнӑ ӗнтӗ. Ӑна уншӑн нимӗн те калаймӑн. Ҫыннӑн пурнӑҫӗ кашнийӗнех хӑйӗн ҫулӗпе чупать ҫав. Сӑвву ҫепӗҫ юрӑ ҫуратма ыйтать», — тесе ҫырнӑччӗ хӑйӗн ҫырӑвӗнче ятлӑ-сумлӑ композитор.

Ю.Д. Кудаков композиторпа каярах та самай ĕçлеме тӳр килчĕ. Вĕсене эпир çак юрăсен пуххине кĕртрĕмĕр.

**А. Юман,**
Раççей писателĕсен Союзĕн членĕ,
РФ культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ.

## ЧӐВАШКАССИ ЮРРИ

Раççей тӗпренчӗкӗ эс пулнӑ,
Çухалнӑ ун талккишӗнче.
Тӳре-шара пач алӑ сулнӑ,
Манма пултарнӑ çут тӗнче.

**Хушса юрламалли:**

Чӑвашкасси! Эс çухалмарӑн,
Пӗтмен телейӗ чӑвашсен.
Мускав таран илтме пултарӑн
Паян Чӑвашкасси тесен.

Хура шӑпа тӗлне пулмарӑн,
Эс пултӑн Яковлев тӗлне.
Кун хыççӑн урӑх çухалмарӑн,
Çапла вӗрентӗн ун шкулне.

**Хушса юрламалли.**

Вӑл уçнӑ шкул хӑй пулчӗ палӑк,
Çакна илетпӗр халь ӑша.
Паян та ӗмӗр асӑнмалӑх
Çутта кӑларчӗ чӑваша.

**Хушса юрламалли.**


Вăхăтлă, чунтан
mf
Раç-çей тĕп-рен-чĕ-кĕ эс пул- нă,
çу- хал- нă ун тал- кки- шĕк-че.
Тӳ-ре- ша- ра-пач а-лă
сул- нă,
ман-ма пул-тар-нă çут тĕк-че.
Хушса юрламалли:
С.1/2
А.1/2
Чă- ваш-кас си! Эс çу-хал- ма- рăн,
пĕт-мен те-


-ле- йĕ чă- ваш- сен.
Мус-кав та- ран илт-ме пу-
-та- рăн
пэ-ян Чă- ваш-кас-си те- сен.
-сен.

# ТИМĔРÇЕНСЕН ЮРРИ

Пирĕн ен — темиçе Тимĕрçен —
Анатри, Вăтамми, пур Ирçел,
Юнашар вырăнаçнă Çĕнни,
Чăвашсем Чăмпальен текенни.

**Хушса юрламалли:**

Пирĕн ен,
Пирĕн ен,
Пирĕн ен — Тимĕрçен.
Çыннисем,
Çыннисем,
Çыннисем вашават та ĕçчен.
Тимĕрçен,
Тимĕрçен,
Пирĕн ен — Тимĕрçен,
Кашни ял,
Кашни ял,
Кашни ял çĕнелет кунсерен.

Çутă ĕмĕр пиллерĕ телей,
Ун таппи ыткăнать ку тĕле.
Тин чăваш йăлл! çиçет хĕвелле,
Вăл калать: «Эп чăлах-и, элле?»

**Хушса юрламалли.**

Çĕрĕм-шывăм пилленĕ пире
Çак телей çăлкуçне ĕмĕре.
Манăн халăх хăюллăн утать,
Çавăнпа Тимĕрçен ыр курать.

**Хушса юрламалли.**


Хастарран. Марш темпěпе
Солист е хор ушкăнě
Пи-рěн ен-те-ми- çе Ти-мěр-çен - А- нат-
ри, Вă-там-ми, пур Ир-çел, ю- на- шар вы- рă- наç- нă çěн-
ни, чă- ваш- сем чăм- паль-ен те- кен-
ни.
Хушса юрламалли:
Пи-рěн ен,
С.
А1
Пи-рěн ен, пи-рěн ен, пи-рěн ен-Ти-мěр-çен.
Çын-ни-
А2
Çын-ни-
Б.


сем,
Ти-мĕр-
сем, çын-ни- сем, çын-ни сем ва-ша- ват та ĕç- чен. Ти-мĕр-
Т.
çен,
Каш-ни ял,
çен, Ти-мĕр-çен, Ти-мĕр-çен- пи-рĕн ен. Каш-ни ял, каш-ни ял, каш-ни
Малтан пуçлама
ff
вĕçĕ
ял çĕ- не-лет кун-се- рен. рен.

## УЛЬЯНОВСК

Опустится ночь ненадолго,
Поблекнет сиреневый цвет,
И вновь над широкою Волгой
Займется весенний рассвет.

**Припев:**

Ульяновск, ты — наша любовь!
Тебе эту песню пою.
Иду я по улицам вновь,
Чтоб юность увидеть твою.

Была эта юность сурова,
Бессмертной отвагой полна.
Из пепла воскрес город снова, —
Нам волжская шепчет волна.

**Припев.**

Я слышу чувашский здесь говор...
Прозрел у Свияги мой род.
Здесь к свету провидец сурово
Тянул свой забитый народ.

**Припев.**

С тех пор у обрыва на Волге
Немало воды утекло.
Стоять тебе в будущем долго,
Одетый в гранит и стекло.

**Припев.**

(*С чувашского. Перевод автора.*)

## УЛЬЯНОВСК

Кĕçех сирĕлет каç чаршавĕ,
Хуллен кăвак çутă сӳнет.
Умра — сарлака Атăл шывĕ,
Хула вăранни илтĕнет.

**Хушса юрламалли:**

Ульяновск, эс — ман юрату,
Сана халаллатăп юрра.
Сан хуйăху — ман ырату,
Ырри те тулли урамра.

Тумхахлă сан яшлăху килнĕ,
Паян сан çинче — çĕнĕ тум.
Кĕлрен эс çĕкленнĕ, вăй илнĕ, —
Калать кун çинчен çутă хум.

**Хушса юрламалли.**

Чăваш сассине те илтетĕп...
Сĕве хĕрринчи чул шкулта
Пĕр улăп-çын чĕртнĕ чĕр витĕм
Чăваш куçне уçнă чăлтах!

**Хушса юрламалли.**

Çыран хĕрринчи аслă Атăл
Сахал-и юхтарнă шывне...
Хуламăр, нихçан та ан ватăл,
Тăнла ĕмĕрсен шăв-шавне!

**Хушса юрламалли.**


Медленно, с большим чувством
mf
пу-стит-ся ночь не на- дол- го, по-блек-нет си-ре-не-вый
цвет, и вновь над ши-ро- ко-ю Вол- гой зай-
Припев:
мет- ся ве-сен- ний рас-свет. Уль- я- новск, ты-


на- ша лю- бовь! Те- бе э - ту пе - сню по -
ю. И - ду я по
у- ли- цам вновь, чтоб ю-ность у- ви- деть тво-
Для начала
Окончание
ю.
ю.

## ТĂВАН ЕН

Тăват енне выртать сан çул,
Тăват енне.
Калать тăван ен:
— Сывă пул! —
Хĕр-ывăлне.

**Хушса юрламалли:**

Вĕçес килет инçе-инçе;
Ырса çитсен,
Ялан тăрать чĕлхе çинче
Пĕр тăван ен,
Пĕр тăван ен.

Хĕсет ют сывлăш кăкăра,
Шыв тутлă мар.
Пур, тунсăх чирĕ пур унта, —
Тӳс, хĕр е ар!

**Хушса юрламалли.**

Çĕклеймĕ ывăннă çунат
Тӳпе таран.
Çул сисĕнмесĕр хупăнать,
Чунра — суран.

**Хушса юрламалли.**

Çăтмах пек пурнăç — тăван ен
Çаплах туртать.
Аса илсен сана куллен
Чун ыратать.

**Хушса юрламалли.**


Хаюллăн, ыткăнса
Васкамасăр, чунпа
Тă_ват ен_не выр_тать сан
суд, тă_ват ен_не.
Ка_лать тă_ванен. Сыва
пул! = Хĕр_ ы_ вăл_ не.
mf
f


Вӗ_ҫес
сен,
ҫе
пӗр тӑ_ван
ен,
пӗр тӑ_ван
ен.
Вӗҫӗ
Эх!

## ЭХ, АННЕÇĔМ-АННЕ

Эх, аннеçĕм-анне!
Эс ялан асăмра.
Ман çунан чĕрене
Ма эс çук-ши çумра?
Çут сăну умăмрах,
Çул кăра, кун ăмăр.
Эс вĕрентнĕ сăмах
Хаклине куртăмăр.

Çамрăк чух пулнă шух,
Шел, пĕлмен уяма.
Пĕлеймен тепĕр чух
Çут ăсна хаклама.
Эс ӳстертĕн пире,
Эс кăлартăн çынна.
Ху çеç кайрăн чире,
Упраймарăн хăвна.

Сӳнчĕ сан çăлтăру,
Кая юлчĕ кĕтни.
Çитĕнет çĕн ăру,
Çĕнтерет çав çĕнни.
Кăтартасчĕ сана
Çакă кĕтнĕ куна...
Санăн çутă сăнна
Ас илетпĕр кăна.


Хӑвӑрт мар, чунтан
mf
Эх, ан-
-не- ҫӗм- ан - не! Эс я - лан а- сӑм - ра. Ман су-
-нан чӗ- ре- не ма эс ҫук- ши ҫум - ра? Ҫут сӑ-
-ну у - мӑм-рах, ҫул кӑ- -ра, кун ӑ - мӑр. Эс вӗ -


I.
-рент-нĕ сă - мах хак-ли - не кур-тă - мăр. Çут сă-
2.
Вĕслеме
-не кур- тă- мăр. // -лет - пĕр кă- на.

# МИЛЫЙ ДОКТОР, ВСЕГДА ВЫ В СТРОЮ

*Посвящается хирургу Сергею Шамраю*

Хоть снаряда не слышится вой,
Сердце пули не ищут давно,
Хоть не хочется встречи с бедой,
Но приходит она все равно.
То бессонница явится мне,
То осколком тревожит недуг,
И опять мое сердце в огне,
Как в кольце атакующих мук.

**Припев:**

В этот час я, на радость мою,
Вашу поступь опять узнаю.

Дни солдатской шеренгой идут,
Мирный путь нас зовет далеко...
Но порою бывает и тут
Обойти нам беду не легко.
...Снова мне улыбнулся рассвет.
И в дорогу зовет непокой.
И пока я гляжу в белый свет,
Перед Вами в долгу, дорогой.

**Припев:**

В этот час я, на радость мою,
Вашу поступь опять узнаю.
Рядом чувствую Вас, как в бою.
Милый доктор, всегда Вы в строю.

(*Авторизированный перевод с чувашского Я. Рогачева и А.Фадеева*).

## ТУХТĂР ТИМЛĔ ТĂРАТЬ ХУРАЛТА

*Сергей Шамрай хирурга халалласа*

Йĕтресем çурăлмаççĕ паян,
Пульăсем шăтармаççĕ çĕре...
Инкекпе эс çавах тĕл пулан,
Йĕрлеме чарăнмасть вăл пире.
Аманать тепĕр чух вут-чĕре,
Чир амакĕ илет тинкене:
Серепи йăлмаклань сире,
Ăмăр сăнĕ хуплать мал ене.

**Хушса юрламалли:**

Шанчăк пур: хулара е ялта
Тухтăр тимлĕ тăрать хуралта.

Çӳл тӳпе, çут хĕвел ялтăрать,
Çул чĕнет... Çӳреместпĕр çуран...
Яка çул та инкек çуратать —
Ăнсăртран эс тӳсетĕн суран.
Çĕнĕрен ялтăрать çут тĕнче,
Çĕнĕ сас янăрать урамра.
Шур халатлă хирург умĕнче
Манăн çĕнĕ тĕнче парăмра.

**Хушса юрламалли:**

Шанчăк пур: хулара е ялта
Тухтăр тимлĕ тăрать хуралта.
Аллăм ĕçшĕн çунать, сывă куç...
Шур халатлă çынна тайма пуç!


Проникновенно
mf
simile
Хоть сна-ря- да не слы-
шит-ся вой, серд-це пу- ли не и- щут дав-
но, хоть не хо- чет-ся встре- чи с бе-дой,
но при- хо- дит о- на




х) Аккомпанемент к 2-му и 4-му куплетам исполнить на октаву выше.

## АРĂМ

Çĕр çинче сахал-и хĕр-хĕрарăм?
Йĕпкĕн хурисем те саррисем...
Пĕринчен тепри хитререх мар-и —
Чечекпе çырла тĕс илнисем?

Хитрисем нумай. Анчах та арăм
Кирлĕ пĕрре çех кун кунлама.
Тикĕс мар этем кун-çулĕ, вăрăм, —
Сăмахпа çеç çăмăл калама.

Хурапа шурра санпа кам пайлĕ?
Кам ăнланĕ йывăр чух сана?
Арăм пултăр ырă та сăпайлă,
Инкекре ал парĕ вăл кăна.

Эп сана шырарăм каçăн-ирĕн
Çамрăк чух чечеклĕ улăхра.
Пурнăç çулĕ йывăр килчĕ пирĕн,
Халĕ те иртмест вăл ырлăхра.

Пултăн манăн шăнкăрчăм-тĕрекĕм,
Чунупа та сăнупа хитре.
Эп — тĕпри юман, эс — ман тирекĕм,
Кăра çил вĕрсен те — хӳтлĕхре.

Тав, çапла пулма пĕлнишĕн, арăм!
Эсĕ маншăн чи хитри — пĕрре.
Санăн умăнта ман пысăк парăм,
Пирĕн туслăх пытăр ĕмĕре!


Хавхалануллӑн
mf
Çӗр çин- че са- хал-и хӗр- хӗ- ра - рам?
Йӗп-кӗн ху- ри- сем те сар-ри- сем...
Пӗ- рин-чен теп- ри хит-ре-рех мар - и -


че- чек- пе ҫыр- ла тĕс ил- ни- сем?
Хит- ри- сем ну- май. Ан- чах та а - рăм
кир- лĕ пер- ре ҫех кун кун- ла- ма. Ти- кĕс мар э-
тем кун ҫу- лĕ, вă - рăм, - сă- мах- па
1.2.
3.
Мăнаçлăн
-ре! Ĕ - мĕ- ре!

## МЕНЕЛЬНИК ЮРРИ

Çĕр ĕмĕрне çулпа виçеççĕ,
Çын ĕмĕрне те унпала.
Халь çеç ачалăхраччĕ эсĕ, —
Çулу выртать сан тăвалла.

**Хушса юрламалли:**

Кам чунпа пуян —
Сăнĕнчен куран.
Çийĕнчех туян:
Вăл — санпа тăван.
Хĕвелле кулан —
Пурăнма аван.
Кул, юрла, тăван, —
Менельник паян.

Çул юписен черетлĕ шучĕ,
Сисмен те, çитнĕ яшлăха.
Çӳл тӳперен ман куçăм курчĕ
Асран кайми ачалăха.

**Хушса юрламалли.**

Малта кун-çул тӳпи куратăп,
Унта çитме те çывăх çул.
Хура çӳçӳ чăпарлансан та,
Чунпа ялан эс çамрăк юл.

**Хушса юрламалли.**


Хавхаланкуллăн
Çи-йĕн-чех ту-ян: вăл са-на тă-ван.
Хĕ-вел-ле ку-лан - пу-рăн-ма а-ван.
Кул, юр-ла, тă-ван - ме-нель-ник па-ян.
Вĕçлеме
Кул, юр-ла, тă-ван - ме-нель-ник па-ян.
a tempo
Кул, юр-ла, тă-ван - ме-нель-ник па-ян.

## МАЛТАНХИ ЮРАТУ

Халиччен лăпкахчĕ эпĕ,
Хумханса-çунса курман, —
Темĕн пулчĕ, çамрăк, çепĕç
Чĕреме вут хыпрĕ ман.

Каç выртсан та, ир тăрсан та
Ман умра пĕр эс кăна.
Куç хупсассăн та куратăп
Шуçăм пек хитре сăнна.

Тĕл пулсассăн — вăтанатăп,
Çыхланса ларать чĕлхе.
Сансăр кун та пурнаймастăп,
Йăлт çухатрăм канлĕхе.

Халиччен лăпкахчĕ эпĕ,
Хумханса-çунса курман.
Темĕн пулчĕ, çамрăк, çепĕç
Чĕреме вут хыпрĕ ман.


Çепĕççĕн
simile
Ха – лич – чĕн лăп – ках – чĕ э – пĕ,
Хум – хан – са – çун – са кур – ман, –
Те – мĕн пул – чĕ, çам – рăк, çе – пĕç




x/Скобкǎри нотǎсене юлашки хутěнче çеç юрламалла.

## АХ, МĔН-МА-ШИ?..

(«Кăвак сирень айĕнче» музыкăллă комедирен)

Ах, мĕн-ма-ши çамрăк ĕмĕр
Чечек пулса тăкăнать?
Ах, мĕн-ма-ши пуçăм кĕмĕл?
Кун иртет — чун хурланать.

**Хушса юрламалли:**

Хурланмасть чун кун иртнишĕн,
Хурланать вăл эс çукран.
Пурнăç çулĕ йӳпленнишĕн
Пĕр сăлтавсăр, ăнсăртран.

Ах, мĕн-ма-ши кĕмĕл уйăх
Пĕлĕтпе хуплать питне?
Ах, мĕн-ма пусать-ши хуйăх
Асăнсан савни ятне?

**Хушса юрламалли.**

Ах, мĕн-ма-ши çамрăк ĕмĕр
Чечек пулса тăкăнать?
Ах, мĕн-ма-ши пуçăм кĕмĕл?
Кун иртет — чун хурланать.

**Хушса юрламалли.**


Хӑвӑрт мар
mf
simile
Ах, мӗн-ма-ши ҫам_рӑк ӗ _ мӗр че-чек пул_са тӑ-кӑ _ нать?
Ах, мӗн-ма-ши пу_ҫӑм кӗ _ мӗл? Кун ир_тет-чун хурла _ нать.


Хур_лан_мас_тăп кун ирт_ни _ шĕн,
хур_ла_на_тăп эс çук-
-ран.
Пур_нăç çу_лĕ юп_лен_ни_шĕн,
пĕр сăлтавсăр, ăн_сăрт_ран.
//-ран.

# МĂШĂР КУÇСЕМ

Çырла-сăну çине куллен пăхатăп
Çыру сĕтелĕ хушшине ларса.
Талăкĕпе шăтарасла пăхсан та,
Мана çитерес çук йăлăхтарса.

**Хушса юрламалли:**

Мăшăр куçсем — сан куçусем,
Яланлăхах илейрĕç канăçа.
Çунаççĕ хĕмленсе вĕсем,
Илемлетеççĕ манăн пурнăçа.

Сан куçусен авăрĕнче путатăп
Кичемлĕх пусса илнĕ самантра.
Аякра чух та юнашар туятăп, —
Çăлăнăçа шыратăп эп санра.

**Хушса юрламалли.**

Пĕрре пăхса илетĕн ăшшăн, çуттăн,
Тепре — салхун, тумхах ĕмĕлкилле.
Кăварланса çунать чĕремçĕм хыттăн, —
Эпир каллех пĕрле ĕлĕкхилле.

**Хушса юрламалли.**


Вăхăтлă, туйăмлăн
Çыр-ла – сă – ну çи-не кул-лен пă – ха – тăп,
çы- ру сĕ – те- лĕ хуш-ши- не лар – са.
Та- лă – кĕ пе шă- та-рас-ла пăх- сан та,
ма- на си – те- рес çук йă-лăх – тар – са.


Хушса юрлама:
Мă- шăр ку- ç- сем - сан ку- çу - сем,
я - лан- лă-хах и-лей-рĕç ка - нă - ça.
Мă -шăр ку ç - сем - сан ку - çу - сем,
и - лем - ле - теç-çĕ ма-нăн пур-нă-ça. пур- нă - ça.
Вĕçĕ
пур- нă - ça.

## ЮРАТУ

Юрату — чĕр пурнăç,
Юрату — кĕтрет.
Е вăл ĕмĕр пурнĕ,
Е пӳкле сӳнет.
Кама мĕскер пӳрнĕ,
Шăпа мĕн пиллет —
Йăлт манран килет,
Йăлт санран килет.

**Хушса юрламалли:**

Ах, шăпа-шăпаçăм,
Эс ан пул кăра!
Пул эс — ирхи шуçăм,
Ялтăра чунра.

Эс — пĕртен-пĕр савнăç,
Чĕрере ялан.
Санпала эп — сăвăç,
Юрă санпалан.
Сансăрăн эп — тăлăх,
Чи телейсĕр çын.
Хӳхлени те кăлăх,
Читлĕхре ман чун.

**Хушса юрламалли.**

Эп сана юратрăм
Туслăн çӳреме.
Тунсăхпа шуратрăм
Çырă çӳçĕме.
Эп сана упрарăм
Вутлă чĕрере,
Тӳпери çунатăм,
Çĕр çинчи тĕрек!

**Хушса юрламалли.**


Хавхалапуллăн
Ю - ра - ту - чĕр пур - нăç, ю - ра - ту - кĕт - рет.
Е вăл ĕ - мĕр пур - нĕ, е пӳк - ле сӳ - нет.
Ка - ма мĕс - кер пӳр - нĕ,
шă - па мĕн пил - лет – йăлт ман - ран ки - лет, йăлт сан - ран ки - лет.


Ах, шă - па - шă - па çăм, эс ан пул кă -
- ра! Пул эс - ир - хи шу - çăм,
ял - тă - ра чун - ра! // - ра!
1,2.
3.

## МАН ПАТА КИЛ!

Ман пурнăçра эс пултăн çĕнĕ çаврăм,
Эс çук чухне кичем, пуш-пушă кил.
— Ман пата кил! — тесе чĕнсе каларăн.
Сан сассуна илсе çитерчĕ çил.

**Хушса юрламалли:**

Ман пата кил,
Ман пата кил,
Ыр тусăм манăн!
Ман пата кил,
Ман пата кил,
Чуна пусар!

Çухалнă телее пĕччен тупаймăн,
Пĕрле тупар, савни, пĕрле тупар!

Çав самантра хама эп туйрăм çăмăл,
Шăтайрĕ хулпуççи çине çунат.
Çӳл тӳпене çити çĕкленчĕ кăмăл,
Кăкăрăмра сӳнми кăвар çунать.

**Хушса юрламалли.**

Ман хăлхара хĕрӳ чĕнӳллĕ ахрăм:
«Ман пата кил, савни, ман пата кил!..»
Тавах сана, ман аякри хĕрарăм,
Тавах сана, чĕнӳллĕ вăштăр çил!

**Хушса юрламалли.**


Васкамасăр, хавхаланса
mf
Ман пур-нăç - ра эс пул-тăн çĕ - нĕ çав - рăм, эс çук чух-
- не ки-тем, пуш - пу - шă кил. - Ман па-та кил! - Те - се чĕн - се ка - ла - рăн.
Хушса юрлама:
Сан сас-су - на ил-се çи - тер - чĕ çил. Ман па - та кил, ман па - та кил,




*) *Юлашки куплетра икĕ хутчен юрламалла.*

## СĂПКА ЮРРИ

Çывăр, хĕрĕм, çывăрах,
Ыйху тутлă пултăрах.
Çитĕн, малалла кармаш,
Сана кĕттĕр çут малаш.

Çитĕн, пепкем, ӳс патвар,
Сан йăху черченкĕ мар.
Пул хастар, хитре, вăр-вар,
Телей пытăр юнашар.

Аçупала аннӳне
ĕçӳ пултăр сан парне.
Ăсу вĕçтĕр тӳпере,
Тĕл пул ху пек чипере.

Çемье çавăр çитĕнсен, —
Кĕтречĕ пур çут тĕнчен.
Сĕм çĕрле е кăнтăрла
Яту çунтăр çăлтăрла.

Çывăр, хĕрĕм, хальлĕхе,
Пут ыйăхри канлĕхе.
Çитĕн, малалла кармаш,
Сана кĕттĕр çут малаш!


Майĕпе, васкамасăр
Çы - вăр, хĕ - рĕм, çы- ва - рах, ый- ху тут- лă
пул- тă - рах. Çи- тĕн, ма-ла- лла кар - маш,
са- на кĕт-тĕр çут ма- лаш. // çут ма - лаш.

# КĔНЕКЕРЕ ПУРРИ


| | |
|---|---|
| Чăвашкасси | 7 |
| Тимĕрçенсен юрри | 10 |
| Ульяновск | 13 |
| Тăван ен | 17 |
| Эх, аннеçĕм-анне... | 20 |
| Тухтăр тимлĕ тăрать хуралта | 23 |
| Арăм | 27 |
| Менельник юрри | 30 |
| Малтанхи юрату | 33 |
| Ах, мĕн-ма-ши?.. | 36 |
| Мăшăр куçсем | 39 |
| Юрату | 42 |
| Ман пата кил | 45 |
| Сăпка юрри | 48 |

**Анатолий Федорович Юман**
**Юрий Дмитриевич Кудаков**

# АХ, МĔН-МА-ШИ?..

## ЮРĂСЕМ

Редактор Г.И. Алимасова
Художественный редактор А.А. Трофимов
Компьютерная верстка Е.В. Дудкина

Подписано к печати 07.07.2007. Формат 60x90 $^{1}$ĕ$_{16}$
Бумага офсетная. Печать ризограф.
Гарнитура Times. Усл. печ. л. 3,25.
Тираж 300 экз. Заказ № 11.

Чувашский государственный институт гуманитарных наук
428015, г. Чебоксары, Московский пр., 29, корп. 1.